Архив ĕçĕсем пирки

# Пирĕн истори – пирĕн пуянлăх

***Паян пирĕн редакцире – «Чăваш Республикин хальхи патшалăх историйĕн архивĕ» республика патшалăх учрежденийĕн директорĕ Людмила Васильевна УСТИМОВА. Эпир унпа Чăваш Республикин архив фондне комплектлассин тата документсене сыхласа хăварассин проблемисем пирки сăмах пуçартăмăр.***

**– Людмила Васильевна, архивсем тени мĕне пĕлтерет-ха вăл?**

– Тĕрĕссипе каласан, архивсем вĕсем истори чăнлăхĕн мулĕ-пуянлăхĕ пулса тăраççĕ. Шăпах ĕнтĕ архивсенче тĕрлĕрен пулăмсемпе улшăнусен ĕнентерĕвĕсем сыхланса юлаççĕ. Чăваш Республикинчи архивсен системине хальхи вăхăтра 4 патшалăх тата 25 муниципаллă архив кĕрет.

**– Хальхи кун йĕркинчи пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри – 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсисене валоризацилеме пуçăнни. Эпĕ ăнланнă тăрăх, пенси ӳстерес текенсен архивсене пымасăр май çук?**

– Пенсисене çĕнĕрен шутлаттарас текенсен пурин те архивсене пыма кирлĕ мар. Хăшĕсенне пенси виçисене хăйсемсĕрех палăртаççĕ. Çапах та пĕтĕмĕшле эсир тĕрĕс калатăр. Пуçăннă валоризаци пире те айккинче хăварма пултараймасть. Вăл нумай пин çын интересĕсемпе çыхăннă. Мĕншĕн тесен ытларах чухне ĕç стажĕпе ĕç укçин калăпăшĕ пирки даннăйсене архив справкисене кура кăна çирĕплетме пулать. Пирĕн архивра уйрăм çынсем пирки 140 пине яхăн ĕç докуменчĕ упранать. Кусем вĕсем пĕтернĕ 1300 организацирен тăратнисем. Кун пек документсем Патшалăх истори архивĕнче те, кашни муниципаллă архивра та пур. Паллă ĕнтĕ, çавăнпа та граждансенчен ытларахăшĕн ыйтăвне пирĕн сотрудниксен тивĕçтерме тивет.

**– Эсир уйрăм çынсен докуменчĕсем тесе асăнтăр. Ку вăл архив докуменчĕсен уйрăм категорийĕ пулса тăрать-и?**

– Çапла, кусем вĕсем ĕçлекенпе ĕç паракан хушшинчи çыхăнусене çирĕплетекен документсем: ĕçе илнин, пĕр ĕç вырăнĕнчен теприне куçарнин, ĕçрен хăтарнин приказĕсем; ĕçлекенсен харпăр хăйĕн докуменчĕсем; ĕçрен хăтарнисен харпăр хăйĕн докуменчĕсем; ĕç укçи тӳленин докуменчĕсем (ведомоçсем, лицевой счетсем). Апла пулсан вĕсем çын ку е вăл учреждениере, организацире, предприятире ĕçленине çирĕплетсе параççĕ. Çак документсене сыхласа упранинчен вара çыннăн ĕç стажне, ĕç укçи калăпăшне, тĕрлĕрен çăмăллăхсемпе усă курмалли правăна çирĕплетесси те килет.

**– Эпĕ тĕрĕсех ăнлантăм-и? Архив учрежденийĕсем граждансен вĕсен ĕç стажĕ тата çăмăллăхсем пирки ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе кирлĕ хурав параймасан та пултараççĕ-и?**

– Çапла, хальхи вăхăтра лару-тăру çавăн пек. Хупăннă организацисен пур докуменчĕсем те хальхи вăхăтра республикăн архив учрежденийĕсене пырса тăмаççĕ-ха. Аса илтеретĕп: сăмах хупăннă предприятисем пирки кăна пырать. Ку самант питĕ пĕлтерĕшлĕ. Енчен те хупăннă организаци вырăнне тепĕр организаци ĕçлеме тытăнать пулсан, ĕçлекенсен документсене упрасси тата граждансен ыйтăвĕсене тивĕçтересси пĕтĕмпех унăн тивĕçĕ пулса тăрать. Архива вара хупăннă организацисем вырăнне урăххисене йĕркелеменнисен докуменчĕсем килсе тăраççĕ. Çавăнпа та нумай организацисенчи çынсен докуменчĕсене упрасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмасăр хăварма пултараймастăп. Раççей Пенси Фондĕнче учетра тăнă тата хыççăн хупăннă юридици вăйĕнчи организацисен списокне тишкерни çавна кăтартса парать. Хупăннă хыççăн вĕсенчен чылайăшĕ документсене архива тăратман.

Шел пулин те, 2008 çулхи декабрь уйăхĕнчен тытăнса кăна документсене конкурс управляющийĕсен обязательнăй майпа патшалăх управне памалли тивĕçне çирĕплетнĕ. Вăл шутра ĕçлекен уйрăм çынсен докуменчĕсене те. Унччен вара «О несостоятельности (банкротстве)» Федераллă саккунпа конкурс управляющийĕн çак ĕçсене пурнăçлама пултарассин «правине» кăна пăхса хунă. Паллă ĕнтĕ, пурте ку «правăпа» усă курман. Мĕншĕн тесен документсене патшалăх е муниципаллă управа парасси укçа-тенкĕ тăкакĕсемпе çыхăннă. Вĕсем документсене йĕркелеме каяççĕ.

**– Апла пулсан ответлăх конкурс управляющийĕн кăна мар, унпа пĕрлех организаци ертӳçин те пулмалла?**

– Паллах. «Об архивном деле в Российской Федерации» Федераллă саккунăн 27-мĕш статйипе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕнче архив ĕçĕ-хĕлĕ пирки калакан законодательствăна пăснăшăн организаци ертӳçисем ответлă пулса тăраççĕ. Айăплисене гражданла право, административлă, дисциплинарлă тата уголовнăй майсемпе ответ тыттарма пăхнă. Тĕрлĕ шайри ертӳçĕсен архив докуменчĕсене упрассинчи ответлăхне ӳстерессипе çыхăннă ĕç конкурс управляющийĕсен ответлăхĕпе кăна çирĕпленсе юласса шанас килмест. Çынсен социаллă хӳтлĕхне ӳстерессипе хушма мерăсем йышăнма кирлĕ. Тепĕр хут çавна палăртса хăварас килет: уйрăм çынсем пирки документсене сыхласа хăварасси вăл архивистсен, организацисен ертӳçисен, служащисен, профсоюз организацийĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Уйрăм предпринимательсен, чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче тата патшалăхăн шутланман ытти организацисенче ĕçлекенсен те айккинче юлмалла мар. Вĕсен çакна асра тытмалла: çын пирки приказра тата ĕç кĕнекинче тĕрĕс çырса пынинчен вĕсен ĕç стажĕ, бухгалтери докуменчĕсене йĕркеллĕ туса пынинчен вĕсен пулас пенсийĕн виçи килет.

**– Людмила Васильевна, сире интервью пама килĕшнĕшĕн тав сăмахĕ калатăп. Пирĕн вулакансем хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе тулли информаци илме пултарчĕç тесе шутлатăп.**

Налук ыйтăвĕсемпе

# Декларацисем тăратас пулать

2010 çулхи январĕн 11-мĕшĕнчен тытăнса декларацисем тăратмалли вăхăт çитрĕ. Вăл апрелĕн 30-мĕшĕччен тăсăлать.

3-НДФЛ формипе пурăнакан вырăнти налук инспекцине декларацие çакăн чухне тăратмалла:

– енчен те эсир хăвăр харпăрлăхра пулнă çурт-йĕре, транспорт хатĕрĕсене, хаклă хутсене тата ытти пурлăха сутса тупăш илнĕ пулсан;

– хваттер, çурт-йĕр, пӳлĕм, автомашина, гараж тата ытти пурлăх хатĕрĕсене арендăна парса тупăш илсен;

– налук агенчĕсем пулса тăман уйрăм çынсенчен, гражданла тата право килĕшĕвĕсемпе уйрăм çынсенчен ĕçшĕн тӳлев (вознаграждение) илнĕ пулсан (вăл шутра килти ĕçсене пуçтаракан, репетиторсем, çавăн евĕрлĕ ĕçсене пурнăçлакан ытти çынсем);

– ытти ĕçсене пурнăçланă чухне налук агенчĕсем тупăшран налук илмен пулсан;

– лотерея ирттерекенсенчен тата ытти вăйăсенче (вăл шутра вăйă автомачĕсемпе усă курса) укçа тӳлевĕ выляса илнĕ пулсан;

– наука, литература тата искусство авторĕн еткерлĕхĕпе тупăш илнĕ пулсан;

– çывăх çынсем шутланман уйрăм çынсенчен парне шучĕпе тупăш илнĕ пулсан;

– енчен те эсир Раççей Федерацийĕн налук резиденчĕ пулсан тата хамăр çĕршыв тулашĕнче тупăш илнĕ пулсан;

– харпăр хăй ĕçĕпе ĕçлекен уйрăм предприниматель пулсан;

– харпăр хăй ĕçĕпе ĕçлекен нотариус пулсан;

– адвокат кабинетне уçнă адвокат пулсан.

Декларацие налук тӳлекен хăй те, çавăн пекех унăн саккунлă представителĕ те тăратма пултараççĕ. Кун пек чухне унăн доверенность кирлĕ пулать. Кунпа пĕрлех декларацие электронлă майпа çыхăнăвăн телекоммуникаци каналĕсемпе те ярса пама пулать. Ун чухне çыхăнăвăн ятарлă операторĕпе килĕшӳ туни кирлĕ.

Çавна та палăртса хăварасшăн. Эсир налук тӳленĕ чухне пурлăх тата социаллă тӳлевсем тĕлĕшпе çăмăллăхсене те тивĕçме пултаратăр. Ку енĕпе деклараци тăратмалли вăхăта палăртман. Апла пулсан налук тӳлессин виçине чакармалли сăлтавсем пирки декларацисене çулталăк хушшинче кирек хăш вăхăтра та тăратма юрать.

**Районсем хушшинчи 6-мĕш № налук инспекцийĕ.**

Сăвă йĕркисем

# Тигр çулĕ

Тигр çулĕ те ак çитрĕ,
Пурне те ырлăх сунать.
Кашнин чĕринче çĕннийĕ
Хĕлхем евĕр ялкăшать.

Пурнăçланччăр ĕмĕтсем,
Савăк кăмăл, эс çитсем!

Хыçа юлччăр хуйхисем,
Унччен пулнă йăнăшсем.

Чи хакли вăл, эс пĕлен,
Çирĕп сывлăх кунсерен.
Ĕмĕрĕпе вĕренни –
Пирĕн ĕçре чи кирли.

**Елизавета ИВАНОВА.**
Мăн Сĕнтĕр шкулĕ.

Юбилей

# Килĕштерсе те юратса – 50 çул

Çĕнĕ çул уявĕсене паллă тунипе пĕрлех Москакасси ял тăрăхĕнче вырнаçнă Вăрманкас Хачăк ялĕнче пурăнакан Мария Александровнапа Григорий Матвеевич Ильинсен çемйинче савăнăçлă уяв пулса иртрĕ.

1959 çулхи май уйăхĕнче çамрăк хĕрпе каччă Шупашкар хулинче ăнсăртран тĕл пулаççĕ. Пĕрремĕш тĕл пулурах вĕсем пĕр-пĕрне чунтан килĕштереççĕ. Çав çулах декабрĕн 23-мĕшĕнче Марьепе Кĕркури пĕр çемье чăмăртаççĕ. Хăйсен ачалăхĕ питĕ йывăр пулнăран вĕсем пĕр-пĕринпе çав тери килĕштерсе, ăнланса, пĕр-пĕрне пулăшса пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те Шупашкарти универбазăра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухса ветеран ятне илме тивĕç пулаççĕ.



Григорий Матвеевич 30 çул хушши водитель пулса ĕçлет, Мария Александровна аслă кладовщикра тăрăшать. Хăй аслă пĕлӳ илмен пулин те, ун патне ăс пухма институтран вĕренсе тухнă çамрăк специалистсем те сахал мар пынă. Иккĕшĕ те вĕсем ĕçре пысăк чысра пулнă.

Хăйсене савăнмалăх икĕ патвар ывăл пăхса çитĕнтерет Ильинсен çемйи. Аслă ывăлĕ Георгий, çар ретĕнчи медицина подполковникĕ, Краснодар хулинче хăйĕн мăшăрĕпе Иннапа хĕрпе ывăл пăхса çитĕнтереççĕ. Кĕçĕн ывăлĕ Геннадий – юстици подполковникĕ, Шупашкарта Лена мăшăрĕпе икĕ ывăл пăхса çитĕнтереççĕ. Ачисем ашшĕ-амăшне манмаççĕ, вĕçĕмех хăнана килсе çӳреççĕ.

Çак телейлĕ мăшăра саламлама вара Хĕл Мучипе Юр пике те килсе çитрĕç. Хăйсем те сисмерĕç Марье аппапа Кĕркури пичче савăнăç куççулĕ юхса аннине. Нумай-нумай ырă сăмах каларĕç телейлĕ мăшăра, юрларĕç, ташларĕç. Вĕсене пăхса Григорий Матвеевич чăтаймасăр хăйĕн Германирен илсе килнĕ тутапа каламалли купăсне туртса кăларчĕ те тĕлĕнмелле ташă çемми шăрантарма тытăнчĕ. Унпа пĕрле вара Надежда Кондукторова хут купăсне тăсса ячĕ. Пурте ташă картине тухрĕç. Мария Александровна вара ĕлĕк хĕрсем мĕнле ташланă, çавăн пек урисене шуçтарса ташларĕ.

Ку телейлĕ те илемлĕ мăшăра пăхса киленме çав тери кăмăллă пулчĕ. Чăнах та нумай та кирлĕ мар çакăн пек ватăсене савăнмашкăн? Ырă сăмах калани те вĕсемшĕн пысăк чыс. Апла пулсан манас марччĕ çакăн пек ватăсене чыслама. Кун-çулĕсем вĕсен вăрăм, сывлăхĕсем çирĕп пулччăр.

**Галина ГОЛУБЕВА,**
**хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Ильинсем.**

Кану та, сывлăх та

# Ачасене савăнăç парнелерĕç

Иштерекпе Сыпай ялĕсем хушшинче вырнаçнă пĕве çинче пăр уçасси пирки ку тăрăхри ялсене хыпар питĕ хăвăрт çитрĕ. Уява хăнасем те çитессине пĕлсен вара кашниех кунта çитсе курма васкарĕ. Шкул ачисем коньκисем илсе пăр çине ăнтăлчĕç. Аслисем те ачисенчен юлмарĕç.

Пăр çине халăх йышлă пухăннă. Пухăннисене район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн специалисчĕ В.В. Петров, Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Голубев, Муркашри сĕт завочĕн директорĕ В.А. Калинин, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.И. Кожанов, вырăнти предприниматель В.А. Любимов саламларĕç. Вĕсем кашниех çак пархатарлă ĕçе пуçарса яма пултарнă А.Л. Шишкина тав сăмахĕ каларĕç. Хăнасем те пушă алăпа килмен. В.А. Калинин ачасем валли коньκисем туянма 5 пин тенкĕ пачĕ, В.И. Кожанов вара 3 пин тенкĕ пама шантарчĕ. Çак тăрăхра çуралса ӳснĕ Э.О. Смелов ачасене икĕ мăшăр коньки парнелерĕ.

Кирек мĕнле ĕç те ушкăнпа пĕрле тăрăшсан кăна çимĕçне пама пултарать. Кунта пăр уçма пулăшакансене те ырă ятпа асăнса хăварас килет. Хоккейла вылякансене хапхасемпе А.В. Ершов тивĕçтернĕ. Пăр çине çутă кĕртме вара А.И. Сядаров, вылянă хыççăн канмалли хӳтлĕх ăсталама В.А. Любимов предприниматель пулăшнă.

Ку вăл иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн вĕçĕнче пулчĕ. Кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнче вара пăр çине каллех халăх йышлă пухăнчĕ. Нумаях пулмасть йĕркеленнĕ хоккей команди Калмăк ялĕн командипе тĕл пулчĕ. Калмăксем хоккейла выляма ăста пулни те хăратмарĕ пулас Сыпайсене. Вĕсем питĕ маттур вылярĕç, шел пулин те, 9:7 шутпа выляса ячĕç. Ку вара пуçа усма мар, малалла тата лайăхрах выляма хистессе шанас килет.

Пăхса тăракансенчен кашниех хăйсен командишĕн пăшăрханчĕ. Пăр çине ачасен асламăшĕсем те çитнĕ. «Пурте кунта тухса килчĕç те, манăн та килте юлас килмерĕ»,– терĕ Павлик мăнукĕ ярăннине савăнса пăхса тăракан 73 çулхи Г.М. Шишкина.

Кашниех килелле çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа утрĕ. Ачасем вара тепĕр кун та пĕрле пухăнса пăр çине тухма калаçса татăлчĕç.

**Н. ЯКОВЛЕВА,**
**Сыпай шкулĕн**
**вĕрентекенĕ.**

Ыйту – хурав

# Больницăрах халал çырас тесен

***Больницăра выртатăп. Тухтăрсем нимех те хăрушши çук тесе шантараççĕ, ватлăх çулĕсемпе çыхăнни кăна. Анчах та ватă çынпа темĕн те пулма пултарать вĕт-ха. Çавăнпа та халал (завещание) çырса хăварас тетĕп. Манăн пĕтĕм пурлăх хамăн хĕрĕме тивĕçтĕр. Ватлăх çулĕсенче вăл мана сахал мар пулăшрĕ. Ывăла вара нимĕн те парас килмест. Çак документа тĕрĕс епле хатĕрлемелли-ши? Эпĕ нотариус патне кайма пултараймастăп вĕт-ха.***

**А. АЛЕКСАНДРОВ, ĕç ветеранĕ.**

– Эсир хăвăрăн пурлăхпа хăвăр пĕлнĕ пек усă курма пултаратăр. Анчах та республика Нотариус палатин президенчĕ Елизавета СОКОЛОВА каласа панă тăрăх, çакна пĕлмелле: енчен те эсир çырнă халал хучĕ саккунлă вăя кĕнĕ тĕле сирĕн ывăл пенсионер е инвалид пулсан, вăл обязательнăй майпа еткерлĕх пайне илсе юлма пултарать. Ытти майсенче вара сирĕн пурлăха халал хăварнă çыннăн кăна илме право пур. Документа çырса хатĕрлеме нотариуса больницăна та чĕнсе илме юрать.